26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ДЕКАБРЬ 11 ШАМАТКУН 244(6481) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне КОНЕВА

Украинăн 2-мĕш фронтăн çарĕсем, наступлени туса пырса, декабрĕн 9-мĕшĕнче, вĕçĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн, Днепр шывĕн сылтăм енчи Украинăн чи паха чугун çул узелĕ тата нимĕçсен обороний Кировоград енчи хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан ЗНАМЕНКА хулине тытса илнĕ.

ЗНАМЕНКА хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ЖАДОВ генерал-лейтенантăн, РОДИМЦЕВ генерал-майорăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-полковникĕн РОТМИСТРОВАН танкисчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВАН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

СМИРНОВ генерал-майорăн 6-мĕш Гвардейски Кременчугски сывлăш десант дивизийĕ, ОГОРОДОВ полковникăн 110-мĕш Гвардейски Александрийски стрелковăй дивизийĕ, ЖУКОВ полковникăн 214-мĕш Кременчугски-Александрийски стрелковăй дивизийĕ, ПОДОПЬЯНОВ полковникăн 233-мĕш Кременчугски стрелковăй дивизийĕ, ОЛЕЙНИКОВ полковникăн 95-мĕш Гвардейски Полтавски стрелковăй дивизийĕ, ФИРСОВИЧ полковникăн 18-мĕш танковăй корпусĕ, танковăй çарсен генерал-майорĕн КИРИЧЕНКАН 29-мĕш танковăй корпусĕ, ВИТЕБСКИЙ полковникăн 32-мĕш танковăй бригади, РЕШЕТНИКОВ подполковникăн 110-мĕш танковăй бригади, СЫРОЕШКИН подполковникăн 53-мĕш мотострелковăй бригади, БАЛАШОВ подполковникăн 6-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, ВЛАСЕНКО подполковникăн 301-мĕш Полтавски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ГОЛЬДИН подполковникăн 308-мĕш Гвардейски Кременчугски-Александрийски минометнăй полкĕ, ПИНЬЧУКОВ майорăн 256-мĕш уйрăм инженери батальонĕ, ЛУНЕВ майорăн 1.446-мĕш хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ, КУЗНЕЦОВ подполковникăн 312-мĕш çĕрлехи çăмăл бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, авиаци генерал-майорĕн БАРАНЧУКАН 203-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, ИНДАКИН подполковникăн 181-мĕш танковăй бригади, ЗАТЫЛКИН подполковникăн 1438-мĕш хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ, СЕМЕНОВ подполковникăн 76-мĕш Гвардейски минометнăй полкĕ, СУХИНИН капитанăн 994-мĕш авиаци полкĕ, ДМИТРИЕНКО майорăн 108-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ тата РЫЖКОВ капитанăн 271-мĕш минометнăй полкĕ.

Тупă çĕнтерĕве ялаклăха палартса хăварас тесе, ЗНАМЕНКА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăсссене «ЗНАМЕНСКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăсссене çапла чĕнмелле тăвас:

6-мĕш Гвардейски Кременчугски-Знаменски сывлăш десант дивизийĕ,
233-мĕш Кременчугски-Знаменски стрелковăй дивизи,
18-мĕш Знаменски танковăй корпус,
29-мĕш Знаменски танковăй корпус,
32-мĕш Знаменски танковăй бригада,
110-мĕш Знаменски танковăй бригада,
53-мĕш Знаменски мотострелковăй бригада,
6-мĕш Знаменски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,
256-мĕш Знаменски уйрăм инженери батальонĕ,
1 446-мĕш Знаменски хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ,
312-мĕш Знаменски çĕрлехи çăмăл бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,
203-мĕш Знаменски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
181-мĕш Знаменски танковăй бригада,
1 438-мĕш Знаменски хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ,
76-мĕш Гвардейски Знаменски минометнăй полк,
994-мĕш Знаменски авиаци полкĕ,
108-мĕш Знаменски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
271-мĕш Знаменски минометнăй полк.

214-мĕш Кременчугски-Александрийски стрелковăй дивизие, 308-мĕш Гвардейски Кременчугски-Александрийски минометнăй полка, 110-мĕш Гвардейски Александрийски стрелковăй дивизие, 95-мĕш Гвардейски Полтавски стрелковăй дивизие тата 301-мĕш Полтавски истребительнăй противотанковăй артиллери полкне, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш е виççĕмĕш хут чапа тухнăскерсене, ХЕРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, декабрĕн 10-мĕшĕнче, 18 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ ЗНАМЕНКА хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене, çирĕм тăватă тупăран вунпĕр хут пересе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ЗНАМЕНКА хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1943 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕ.

ГОСУДАРСТВĂНА СУТНĂ ТЫРРА ХАТĔРЛЕВ ПУНКТНЕ ТУРТТАРАС ĔÇЕ ВĂЙЛАТСАХ ПЫМАЛЛА!

ТАТА ВИÇĔ РАЙОН ТЫРĂ ТУРТТАРСА ПĔТЕРНĔ

Ĕнер, декабрĕн 10-мĕшĕнче, тата тепĕр виçĕ район государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарса пĕтерчĕ: Етĕрне (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сомов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Спиридонов юлташ), Улатăр (райком секретарĕ Горбунов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Поверенов юлташ), Куважино (райком секретарĕ Новиков юлташ, райисполком председателĕ Кругликов юлташ).

Конюх Яковлев государствăна 82 пăт тырă сутрĕ

КАЛИНИНО, декабрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсем союзлă виçĕ державăн руководителĕсен конференцийĕ йышăннă историллĕ решенисене патриотла пысăк ĕçсемпе ответлеççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз государствăна 5.000 пăт ытла тырă сутрĕ. Государствăна тырă сутса Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе кунта колхозниксем хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. 11 колхозник государствăна 40-шер пăтран кая мар тырă сутрĕç, ăна çийĕнчех хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Колхоз конюхĕ Иван Яковлевич Яковлев юлташ государствăна 82 пăт тырă сутрĕ. Колхоз бригадирĕ Александр Волков 70 пăт сутрĕ. Вĕсенчен В. Белов юлташ та юлмарĕ. Ватă колхозник Василий Белов юлташ государствăна 70 пăт тырă сутрĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра та, тата ытти колхозсенче те çапла. Ленин ячĕпе тăракан колхоз хатĕрлев пунктне 10 пин пăт ытла тырă леçсе пачĕ. Çак шутран 5.000 пăтне колхозниксем хăйсен запасĕнчен сутнă. Комсомолец Николай Владимиров бригадир государствăна 67 пăт, колхозăн старши конюхĕ Петр Захаров—59 пăт, колхозник Федор Макаров—50 пăт тырă сутрĕç.

Ф. РОМАНОВ.

Государство валли тырă сутăн илес ĕçе ăнăçлă пурнăçланă тата государствăна сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене вăхăтра леççе панă çак районсемпе колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

29. Калинино районĕнчи **«Броневик»** колхоз (колхоз председателĕ **Федоров** юлташ, комсомол организацийĕн секретарĕ **Петрова** юлташ). Вăл государствăна 4.100 пăт тырă сутса, ăна пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леççе панă.

30. **Первомайски район** (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **И. Долгов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **П. Васильков** юлташ).

31. **Çĕмĕрле районĕ** (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **В. Григорьев** юлташ).

32. Улатăр районĕнчи **«Путь Ильича» колхоз** (колхоз председателĕ **Яблонский** юлташ, парти организацийĕн секретарĕ **Титова** юлташ). Вăл государствăна 17.516 пăт тырă сутнă.

Вăрнарсем пек ĕçлемелле

ВĂРНАР. (**Хамăр корр.**). Çак кунсенче кунта кĕçĕ-хĕррисĕр лавсем килсе тăраççĕ. Чылай колхозсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне хĕрлĕ обозсемпе килсе параççĕ.

Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне хăвăрт леççе пачĕç. Калинино районĕнчи колхозсем те государствăна сутнă тырăран чылай пысăк пайне хатĕрлев пунктне леçнĕ. Ку районран кашни кун 450—500 лав тырă килсе тăрать.

Çав вăхăтрах Элĕк, Красноармейски районĕсем тырă леçес ĕçре юлса пыраççĕ. Элĕк районĕнчен акă, куллен 150—180 лав çеç килсе тăрать.

Хатĕрлев пунктĕнчи çитменлĕхсене те палăртса хăвармалла. Приемщиксем çаврăнăçусăр ĕçленине пула, тырă леçме пынă колхозниксен чылай вăхăт хушши ахаль тăма лекет.

Заготпункт руководителĕсем (директорĕ Клибышев юлташ) çав çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Тырă пама пыракансем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе организацилемен: калаçусем, докладсем туса ирттермеççĕ, хаçат-журналсем çук. Çапла вара темиçе çĕр çын вăхăта çуна çинче ларса ирттереççĕ.

ВКП(б) Вăрнар райкомĕн çакăнта агитмассăллă ĕçе анлăн сарса ямалла. Ана тырă пама пыракан кашни колхозник кĕтет.

Сутнă тырра хатĕрлев пунктне

ШАХАСАН. Паянхи куна районри колхозсемпе колхозниксем государствăна 157.000 пăт тырă сутнă. Сутнă тырăран 110.000 пăтне хатĕрлев пунктне леççе панă. «Красноармеец», «Çĕнĕ пурнăç», «Ударник», Максим Горький ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те, пурĕ 16 колхоз, сутнă тырра пĕтĕмĕшпех леççе панă. Ухманти «Çĕнтерÿ» колхоз планран ирттерсе тата 5.000 пăт сутрĕ. Сутнă тырра хатĕрлев пунктне леççе пачĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 9-мĕшĕнче КРЕМЕНЧУГ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçкерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса наступлени туса пынă, халăх пурăнакан вăйлă çирĕплетнĕ пунктсене — ВОРОНОВКА, ПОДОРОЖНОЕ, ЧАПЛИЩЕ, ТАРАСОВКА, КОЛОНТАЙ-ПОЛЬСКИЙ, РАЦЕВО, КОЛОНТАЕВ, СТЕЦОВКА, СНЕЖКОВКА, ПЕТРОВО, МОШОРИНО, ЗАРУДНЫЙ БАЙРАК, МИТРОФАНОВКА, СПАСОВО ятлă пунктсене тата МЕДЕРОВО ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

ЧЕРНЯХОВ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен шултăра вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 78 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 75-шне ЧЕРНЯХОВ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кременчуг хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пынă. Тăшман вăйлăн хирĕç персе тăрать, контратакăсем тăвать. Совет çарĕсем хытă çапăçнă хыççăн малалла куçнă та халăх пурăнакан вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр пунктшăн çапăçнă чухне пĕр чаçăн боецĕсем гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Хăй тĕллĕн çÿрекен 5 тупă тата 30 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 3 бронетранспортер, 12 тупă, 37 пулемет, 8 миномет, артиллери склачĕ тата япаласен 2 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, чугун çул тăрăх пырса, Медерово ятлă станцие тытса илнĕ. Çав станци районĕнче тăшман питĕ вăйлă хирĕç тăнă, анчах ăна, пысăк çухатусем тÿстерсе, сирсе янă. Нимĕçсен каялла чакнă чухне пăрахса хăварнă стрелковăй хĕçпăшалĕсемпе боеприпасĕсене нумай тытса илнĕ.

* * *

Черняхов хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Тăшман, пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăрах, çапăçăва танксемпе пехотăн çĕнĕ чаçĕсене кĕрте-кĕрте янă. Тăшманăн танкĕсемпе пехотин шултăра вăйĕсем тунă атакăсене сирсе янă чухне пĕр соединени чаçĕсем паян нимĕçсен 46 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 7 туппине тата 11 бронетраспортерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем нимĕçсен 29 танкне тата 20 автомашинине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тăшман çынсем тĕлĕшпе калама çук пысăк çухату тÿснĕ.

* * *

Хура тинĕсри флотăн авиацийĕ тăшман портне тапаннă, хăвăрт çÿрекен 2 десант баржине тата хуралта çÿрекен пĕр катера шыва путарнă. Портра темиçе тĕлте пушарсем тухнă тата питĕ вăйлă взрыв пулнă.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсен фронталла каякан 5 çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 4 паровоз, çарсем турттарса пыракан 33 вагон тата танксемпе автомашинăсем турттарса пыракан темиçе вунă платформа çĕмĕрĕлнĕ. Минск облаçĕнчи партизансен отрячĕ ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсен çар чаçĕпе темиçе кун хушши çапăçнă. Совет патриочĕсем гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем пĕр тупă, 84 винтовка, 12 пулемет, боеприпассем нумай тытса илнĕ тата çынсене тыткăна илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 19-мĕш танковăй дивизийĕнчи 73-мĕш гренадерски полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Франц Павлик çапла каласа панă: «Сентябрь уйăхĕн варринче Францире тĕрлĕ чаçсенчи салтаксенчен хăйне уйрăм батальон тунăччĕ, ăна Вестенбергер командирăн ятне панăччĕ. Батальонра 6 ротăччĕ. Эпир часах Хĕвелтухăçĕнчи фронта тухса кайрăмăр. Малтанхи çапăçусенчех пирĕн ротăран 80 çын пĕтрĕ, икĕ эрнерен вара «Вестенбергер» батальон йăлтах пĕтсе ларчĕ. Чĕрĕ юлнă салтаксене 19-мĕш танковăй дивизири 73-мĕш полкăн подразделенийĕсене ячĕç. Францирен тухса кайнă чухне эпир пире Российăра мĕн кĕтнине, фронтра çухатусем пулассине пĕлнĕ. Анчах та батальона çаван пек кĕске срокрах аркатса тăкассине никам та шухăшла та илмен. Эпĕ 73-мĕш полкăн 2-мĕш ротине лекрĕм. Полкра темиçе кун хушшинче атака тума хатĕрленчĕç. Кăтартнă сехетре артиллери пеме тытăнчĕ, анчах та вырăссен артиллерийĕ çав тери вăйлăн пенипе пиртен никам та пуçне çĕклеймерĕ. Офицерсем, пистолетсемпе хăратса, атакăна кайма хăваларĕç, анчах та вĕсем никама та ура çине тăратаймарĕç. Вырăссем пирĕн окопсене кĕрсе кайсан, эпĕ ытти салтаксемпе пĕрле тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕç çарĕсем каялла чакнă чухне вăйпа хăваласа кайнă чирлĕ тата ĕçлеме пултарайман совет гражданĕсене нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискеррĕн вĕлереççĕ. Витебск облаçĕнчи Гурки поселокĕнче ноябрĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсем, наркăмăшлă яшка çитерсе, 2 эшелона вĕлерсе пĕтернĕ, çав çынсем хушшинче чирлĕ совет гражданĕсем нумай пулнă. Минск хулинче икĕ кун хушшинче кăна—ноябрĕн 18-мĕшĕпе 19-мĕшĕнче—фашистла ирсĕрсем ĕçлеме пултарайман старниксемпе хĕрарăмсене тата ачасене, 1.500 çынна яхăн, наркăмăш парса вĕлернĕ. Вĕлернĕ çынсен ÿчĕсене çунтарса янă. Тискер ĕçсем туса пырса, гитлерла вăрă-хурахсем çав вăхăтрах хăйсен совет çĕрĕнче тунă преступленисен йĕрĕсене шăла-шăла лартаççĕ. Минск хулинчен инçех мар вырăнта, Тростенец ятлă ялта, Красное Урочище ятлă çар хули пулнăскерĕн территорийĕнче нимĕçсем хăйсем асаплантарса вĕлернĕ совет гражданĕсене пытарнă масарсене чава-чава тухнă. Çав шăтăксенчен туртса кăларнă вилĕсене бензин сапса çунтарса янă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче Советски, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк районĕсем чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен сÿтсе-яврĕ.

ВКП(б) Обкомĕ асăрхаттарнă хыççăн та Советски, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк райсовет исполкомĕсен председателĕсем Малинин, Самсонов, Полянин, Филимонов юлташсем тивĕçлĕ выводсем туман, чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана тултарма татăклă мерăсем йышăнман. Иккĕмĕш çур çулхи плана кăçалхи декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Советски район хатĕрлес енĕпе 45 процент, турттарас енĕпе 61 процент, Чкаловски район хатĕрлес енĕпе 37 процент, турттарас енĕпе 39 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ хатĕрлес енĕпе 39 процент, турттарас енĕпе 38 процент тата Элĕк районĕ хатĕрлес енĕпе 48 процент, турттарас енĕпе 62 процент çеç тултарнă. Плана тултарманни асăннă райсовет исполкомĕсен председателĕсем чугун çул валли вутă хатĕрлес ĕç вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшпе пысăк вырăнта тăнине хакламаннинчен килнĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тултарассишĕн ответлăха райсовет исполкомĕсен председателĕсем çине хунă пулин те, асăннă райсовет исполкомĕсен председателĕсем вăрманта ĕçлеме çынсем тата туртăм вăйĕ кирлĕ таран мобилизацилемен. Иккĕмĕш çурçулăн малтанхи пилĕк уйăхĕ хушшинче вăрманта ĕçлемелли плана, ĕçкунĕпе шутласан, Советски район çуран çынсем енĕпе 47 процент, лашапа ĕçлес тĕлĕшпе 45 процент, Чкаловски район çуран çынсем енĕпе 63 процент, лашапа ĕçлес тĕлĕшпе 30 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ çуран çынсем енĕпе 39 процент, лашапа ĕçлес тĕлĕшпе 20 процент, Элĕк районĕ çуран çынсем енĕпе 45 процент, лашапа ĕçлес тĕлĕшпе 18 процент çеç тултарнă. Ĕçленĕ вырăна лашасем валли шултăра апатсем турттарса тăрассине организацилемен, ĕç вăйĕ ушшăнса тăнине пĕтермен. Советски районра мобилизациленĕ çынсем ĕçрен пăрăнни те пулнă. Анчах вĕсене ĕçлеме ярас тĕлĕшпе прокуратура органĕсем те мерăсем йышăнман.

Обком бюровĕ иккĕмĕш çурçулта чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеме çынсем тата туртăм вăйĕ мобилизацилемелли плана тултарманшăн Советски райсовет исполкомĕн председательне Малинин юлташа, Элĕк райсовет исполкомĕн председательне Филимонов юлташа ятласа хăварнă, декабрĕн 15-мĕшĕччен ку тĕлĕшпе ĕçе лайăхлатмасан, вĕсене партирен кăларса суда памалла пулать тесе асăрхаттарнă.

Чкаловски райсовет исполкомĕн председательне Самсонов юлташа тата ВКП(б) райкомĕн секретарьне Никитин юлташа, Хĕрлĕ Чутай райсовет исполкомĕн председательне Полянин юлташа тата ВКП(б) райкомĕн секретарьне Захаров юлташа, вĕсем Оборонăн Государственный Комитечĕн заданине пурнăça кĕртес тĕлĕшпе ответлăха туймасăр ĕçленине палăртса, иккĕмĕш çурçулта чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тултармасан парти умĕнче ответ тыттармалла пуласси çинчен асăрхаттарнă.

Райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене иккĕмĕш çурçулта чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана пĕтĕмпех тултармашкăн ĕçпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран мобилизацилеме тата лашасем валли апатсем кирлĕ чухлех парса тăма хушнă.

Чăваш АССР Вăрман промышленность халăх комиссариачĕн вăрман хатĕрлекен предприятийĕсем вăрманти ĕç вăйĕпе çителĕклĕ усă курас тата ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе ответлăха туйса ĕçлемеççĕ. Вăрман промышленность халăх комиссарне Дубов юлташа, вăрман лартса тăвас тата пăхса ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен управлени начальникне Яковлев юлташа, вăрман хатĕрлекен предприятисен директорĕсене вăрман ĕçĕнчи мĕнпур çитменлĕхсене халех пĕтерме, çапла вара чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарма хушса хăварнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. Я. Вышинский юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Совет государствишĕн çав тери паха ĕçсем тунăшăн Андрей Януарьевич **ВЫШИНСКИЙ** юлташа, вăл 60 çул тултарнă май, **ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943-мĕш çулхи декабрĕн 9-мĕшĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Чкаловски районри «Осоавиахим» колхозăн кок-сагыз акса ӳстерекен звено пуçлăхĕ М. С. Самарова юлташ. Вăл ĕç нормине 250—300 процент тултарса пынă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çĕрулми тăрри тата удобренисем хатĕрлетпĕр

Эпир, Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ туллимар вăтам шкулти пионерсемпе вĕренекенсем, кăçал çĕрулми тăррине тата вырăнти удобренисене пухас тĕлĕшпе Пĕтĕм Совет Союзĕпе туса ирттернĕ конкурсра шкулсем тăрăх иккĕмĕш вырăн йышăнтăмăр, хамăрăн республикăра 1-мĕш вырăн йышăнтăмăр.

Пирĕн шкула 1-мĕш преми—1000 тенкĕ укçа памалла тунă, ку ĕçе ертсе пынă О. С. Ипатована 500 тенкĕ тата чи лайăх пухакансене—600 тенкĕ памалла тунă. Премипе пĕрле В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен академийĕн тата РСФСР Наркомпросĕн çамрăк натуралистсен центральнăй станцийĕн грамотисене параççĕ.

В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен академийĕ тата РСФСР Наркомпросĕн Çамрăк натуралистсен центральнăй станцийĕ конкурса тепĕр хут туса ирттерме йышăннă. Эпир, çав конкурса хутшăнса, çак ĕçсене пурнăçа кĕртме пулатпăр:

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕтĕм шкулĕпе 3.000 килограмм çĕрулми тăрри пухатпăр (пĕлтĕр 2.107 килограмм пухнă). 1.000 витре кĕл пухатпăр (пĕлтĕр 500 витре пухнă). 700 килограмм кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухатпăр (пĕлтĕр 500 килограмм пухнă).

Шкулти пур вĕренекенсем те 100 процентпех лайăх вĕренсе пымалла, дисциплина отлично пулмалла. Шкулти кашни вĕренекен 8 килограмм çĕрулми тăрри, 3 витре кĕл, 3 килограмм кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухать.

Тăван çĕршыва çĕрулми ытларах туса илме пулăшас тесе саваăнса ĕçлетпĕр, мĕншĕн тесен çав пирĕн ĕç те тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартать.

Тума пулнă ĕçсене эпир пурнăçа кĕртетпĕрех, конкурсра пĕррем ĕш вырăн йышăнассишĕн çине тăрсах кĕрешетпĕр.

Çав ĕçри социализмлă ăмăртăва çӳлерех çĕклер!

Пурте—çĕрулми тăррипе вырăнти удобренисене пухма!

Шкул директорĕ НИКИТИН, завуч ИПАТОВА, комсомол организацийĕн секретарĕ МАРТЫНОВА, пионерсен аслă вожатăйĕ ПАВЛОВА, вĕренекенсем БОГОМОЛОВА, ЧИЛИМОВА, ТИМОФЕЕВА, РОМАНОВ, ЧЕЧНЕВ, КУЗНЕЦОВ, ПОПОВ. ЗИМИНА.

Агрокружок уçăççĕ

ШАХАСАН. (**Хамăр корр.**). Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз 800 лав тислĕке купасем туса çĕртме хатĕрлерĕ. Вăрлăх çителĕклĕ таранах уйăрса хунă, вĕсене çавра алапа тата триерпе сортларĕç. Ялхуçалăх машинисене тирпейлесе лартнă. Урапасемпе транспорт инвентарьне юсама уйрăм бригада организациленĕ.

Çитес кунсенче агротехника кружокĕ ĕçлеме тытăнать. Кăçал агрокружокран 60 çын ытла вĕренсе тухмалла. Агрокружока агротехник В. Игнатьев юлташ ертсе пырать.

Çуракине хатĕрленес ĕçре колхозри коммунистсемпе комсомолецсем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Н. Нежданова комсомолка хире 50 лав ытла тислĕк кăларчĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Агротехникăна вĕренеççĕ

КАЛИНИНО. Эльмекти Пушкин ячĕпе тăракан колхозра агротехникăна вĕренмелли кружок организациленĕ. Кружокăн 4 заняти пулса иртнĕ. Занятисене 60 колхозник ытла çӳрет. Унта колхоз председателĕ З. Степанов, колхоз тимĕрçи Т. Малов, учитель Г. Васильев тата З. Малова юлташсем—ялхуçалăх машинисемпе ĕçлеме, агротехника правилисене вĕрентеççĕ.

Б. Ш.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шĕнерти агитаторсен ĕçĕ

КАЛИНИНО. Шĕнерти «1-ое Мая» колхозри агитколлектив колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван туса пырать. Агитколлектив руководителĕ коммунист В. Иванов юлташ агитаторсене пуха-пуха калаçать, умра тăракан кулленхи задачăсемпе паллаштарса, вĕсене мĕнле пурнăça кĕртмелли çинчен каласа парать. А. Филиппова, Я. Чирков, М. Анисимов тата А. Егорова агитаторсем çĕнĕ хаçатсем колхоза çитсенех колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, вăрçă эпизочĕсене, партипе правительствăн постановленийĕсене вуласа параççĕ. Вĕсем калаçусене вырăнти чĕрĕ примерсемпе çыхăнтарма пĕлеççĕ, пĕтĕм вăя фронт интересĕсемшĕн кĕрешес ĕç тавра мобилизациленĕ.

Çавна пула «1-ое мая» колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государство умĕнчи парăмсене татнă хыççăн, государствăна 1944 çулшăн 50 центнере яхăн тĕш тырă, 15 центнер аш-какай пачĕ. Сĕт-çу 1944-мĕш çулшăн та парса татнă. Халĕ 1945 çулшăн параççĕ. Колхоз, обществăллă выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл хĕл каçарас тесе, йăшă та таса витесем юсаса хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне 15 çамрăк тиха вырнаçмалăх ăшă вите тунă.

Çавăн пекех кунта Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренмелли, агротехникăна вĕренмелли кружоксем лайăх ĕçлеççĕ. Унта колхозниксене анлăн явăçтарнă.

Агитаторсем хăйсен ĕçне юлашки вăхăтра уйрăмах вăйлатрĕç. Çавна май колхозниксем кĕске вăхăт хушшинчех государствăна 1.500 пăт тырă сутса хатĕрлев пунктне леçрĕç. Халĕ вĕсем çитес çулхи вăйлă тыр пулăшăн кĕрешеççĕ.

Колхозри пур бригадăсенче те стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлараççĕ. Унта çуракине мĕнле хатĕрленнине çутатса тăраççĕ. Уборка вĕçленнĕренпе 20 номер стена хаçачĕ кăларнă та ĕнтĕ. Хаçат чăнахах та колхозниксене ĕçе мобилизацилет. Халĕ 200 центнер ытла вăрлăх сортланă, уя 900 лав тислĕк кăларнă, 35 центнер кĕл пухнă. Комсомолец Димитриев хăй пĕччен 20 плуг юсанă. Ыттисене те çак кунсенчех юсаса пĕтерет.

Б. ШОРНИКОВ

Комсомолецсем çинчен маннă парторганизаци

ШАХАСАН. (**Хамăр корр.**). Энтриялĕнчи «Герой» колхоз—пысăк, унта партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем пур. Анчах та унти комсомолецсен ĕçĕсем курăнмаççĕ, вĕсем колхозри ĕссен тулашĕнче тăраççĕ.

«Герой» колхоз районра пур ĕçсенче те юлса пырать. Кăçал тырă вырнă чухне те, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра пурнăçласа пырас тĕлĕшпе те начар ĕçлерĕ. Ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче тин аван çапса пĕтерчĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас, коксагыз акса хăварас тата выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлерĕ.

Мĕншĕн? Комсомолецсем колхозниксем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе йĕркеллĕ туса пыман. Колхозниксене хаçат-журналсем вуласа парас, вĕсене хамăр тăван çĕршыври, Отечественнăй вăрçă фронтĕнчи хыпарсене ăнлантарса парас ĕçе пачах та хутшăнман. Колхозра 6 бригада, анчах та вĕсенче кăçал пĕр номер стена хаçачĕ те кăларман. Колхозниксене тухăçлăн та ăмăртуллăн ĕçлеме мобилизацилес вырăнне, комсомолецсем хăйсем колхоз ĕçĕнчен пăрăнса çӳренĕ. Комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ В. Афанасьев хăй кăçал 65 ĕçкунĕ çеç тунă, ĕçе бригадирсем хыттăн ятланă хыççăн çеç хутшăнкаланă. Халĕ вăл, октябрь уйăхĕнчен пуçласа, ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет, анчах кунта та вăли-шали ĕçлет.

Çуллахи вăхăтра кунти комсомол организацинче 14 çын шутланса тăнă, анчах халĕ вăра чăннипе миçе комсомолецне никам та пелекен çук. Ялта çамрăксем нумай, анчах çулталăк хушшинче пурĕ те 2 çамрăка çеç комсомол ретне явăçтарнă. Октябрь уйăхĕнчен пĕр пуху та ирттермен.

Çамрăк комсомолец С. Ильин — колхоз бригадирĕ пулса ĕçлет. Вăл — Отечественнăй вăрçă инвалидĕ. Комсомол ретне кăçал тин кĕнĕ. Анчах ăна ĕçри опыта ӳстерсе, вĕрентсе пырас тĕлĕшпе комсомол организацийĕ нимĕн те туман-ха.

Комсомолецсем çапла начар ĕçленни, пуринчен ытларах, кунти парти организацийĕ вĕсем çинчен манса кайнинчен килнĕ. Парти пухăвĕсенче кăçал комсомолецсен ĕçĕсем çинчен пĕрре те сӳтсе явман. Ку вăл парторганизаци комсомолецсен ĕçĕсемпе интересленменнине пĕлтерет. Парторганизаци секретарĕ М. Шурукова юлташ комсомол организацин секретарĕ камне те пĕлмест. ВЛКСМ Шăхасан райкомĕ те «Герой» колхозри комсомолецсен ĕçĕсемпе интересленмен.

Халĕ колхозра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе малтанхи ĕçсене тума тытăннă. Колхозниксем вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех уйăрса хунă. Колхозри триерпа сортировкăсене юсанă, вăрлăхсене сортлама тытăннă. Пĕтĕмпе 2 пин лав тислĕк хатĕрленĕ, 300 гектар çинче юр тытса хăварма палăртнă. Анчах та çак ĕçсене комсомолецсем пачах та хутшăнман.

ВЛКСМ Шăхасан райкомĕпе «Герой» колхозри парти организацийĕ комсомолецсем хушшинчи ĕçе йĕркелесе ярас тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма тивĕçлĕ.

С. АСЛАН.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене улăштарни пулмалла мар

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн продуктивноçне ӳстересси выльăх-чĕрлĕхсене мĕнле пăхнинчен нумай килет. Çакна эпир кашни ферма ĕçĕнче уçăмлăн куратпăр. Акă, Куславкка районĕнчи «Спартак» колхозри фермăсен ĕçне илсе пăхар. Унта ĕнесене колхозница Леобокина юлташ пăхать. Вăл çав ĕçре пиллĕкмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Кăçал Леобокина юлташ хăй пăхакан 12 ĕнерен ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çитиччен 11.978 литр сĕт суса илнĕ. Çапла, вăл планпа палăртнинчен 2.753 литр сĕт ытларах илнĕ. Çамрăк пăрусене те пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Çакăншăн Леобокина юлташ, сĕтшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе, 498 литр сĕт илме тивĕçлĕ. Çак çитĕнӳсене вăл, паллах, хăйĕн ĕçне лайăх вĕренсе çитнипе тума пултарнă.

Çав колхозра ĕнесен тепĕр ушкăнне пăхнă çĕрте Т. Михлякова юлташ ĕçлет. Вăл ĕçлеме тытăннăранпа икĕ уйăх та иртмен-ха. Унччен малтан çав вырăнта ĕçлекенсем 10 уйăх хушшинче 5 çын улшăннă. Çакна пула унта ĕнесем те начар ӳт-пуллĕ, 4 ĕне хĕсĕр юлнă. Унта сĕт суса илмелли плана та тултарса çитереймен.

Пăрусене пăхас тĕлĕшпе колхозра Мария Харькова 4 çул хушши ĕçленĕ. Вăл ĕçленĕ тапхăрта пăрусем пачах та вилмен. 1942 çулта Мария Харьковăна урăх ĕçе янă, ун вырăнне Анна Харькова юлташа лартнă. Çакăн хыççăн, пăрусене лайăх пăхман пирки, пĕр пăру вилнĕ, теприне вилесрен пуснă. Кăçал вара пăрусене пăхма татах Мария Харьковăна лартнă. Халĕ вăл пур пăрусене те 6 уйăха çитиччен лайăх пăхса çитĕнтерчĕ. Çавăншăн вăл хушса тӳлемелли йĕркепе 11,5 килограмм какай илет.

Асăннă фактсем фермăсенче ĕçлекенсене тăтăшах улăштарни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн продуктивноçне ӳстерес ĕçе пысăк чăрмав кӳнине уçăмлăн кăтартса параççĕ. Çакна колхоз председателĕсен ялан асра тытмалла. Фермăсенче ĕçлекенсене улăштарса тăни пулмалла мар.

Е. НИКОЛАЕВА.

(Куславкка райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ.

Шкул ачисем вĕри апат çиеççĕ

СЕНТЕРВАРРИ. (**Телефонпа**). Анат Макачри туллимар вăтам шкулăн (директорĕ В. Леонтьев юлташ) 2,4 гектарлă çĕр участокĕ пур. Вăл участок çинче кăçал пахча-çимĕçсем ăнса пулчĕç. Çавăнпа та вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах ачасене вĕри апат çитереççĕ. Апата лайăх пахалăхлă какайпа пĕçереççĕ. Унта 200 ача çиме çӳрет. Шкул дирекцийĕ тăрăшнипе, столовăй валли халĕ татах 58 килограмм туртакан сысна илнĕ. Ана çитерме шкул ачисем 25 пăт йĕкел пуçтарса хатĕрленĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Ӳкерчĕк çинче: оруди наводчикĕ **К. Д. Муленков.** Вăл Первомайски районри «Путь к социализму» колхозран. Нумаях пулмасть вăл хăйĕн расчечĕпе пĕрле тăшманăн 2 боеприпас складне тата 30 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

П. МЕЛЕНТЬЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

„Красное Сормово" колхозникĕсене пысăк тав

Пирĕн хаçат редакцине фронтран Михаил Ипполитович Иванов юлташран çыру килчĕ. Вăл унта çапла çырать:

«Хисеплĕ редактор! Эпĕ сирĕн хаçат урлă Красноармейски районри «Красное Сормово» колхоз руководительне тата унти колхозниксене пĕтĕм чĕререн тав туни çинчен пĕлтерме ыйтатăп.

Манăн çемье, çавăн пекех ытти чылай çынсем те, 1943 çулта Ленинградран сирĕн чечекленекен республикăри Красноармейски района куçса пынă. Вĕсене Яманак ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхоза вырнаçтарнă. Колхозăн тимлĕ руководителĕсем манăн çемьене кĕске вăхăт хушшинчех хваттер тупса панă, колхоза çитсенех тырă парса пулăшнă, çамрăк ачасене яслине вырнаçтарнă, вата аттене колхозра ĕç тупса панă, манăн арăма та —халăх учительницине Мария Петровна Иванована ĕç панă.

Çак пулăшушăн эпĕ питех те савăнтăм. Манăн çемьешĕн çакăн пек тăванла тăрăшни ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкма мана çĕнĕ вăйхал хушса пачĕ.

Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни—Хĕрлĕ Çаршăн, унăн боецĕсемпе командирĕсемшĕн тăрăшниех пулать. Ахальтен мар аслă Ленин çапла каланă: «Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшса тылра тунă кашни ĕç—çийĕнчех красноармеецсен шухăш-кăмăлĕнче палăрать, тылра красноармеецсемпе командирсене пулăшса тунă кашни ĕç вĕсен шухăш-кăмăлне çирĕплетет, Хĕрлĕ Çара вăйлатать тата унăн наступленине тăвас пултарулăхне ӳстерет».

Совет халăхĕ хăйĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарне, вăрçă хирĕсенче тăван çĕршыв чысĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçакан хăйĕн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене хĕрӳллĕн юратса тăрать.

Эсир, мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле, пирĕн фронтри çĕнтерӳсемшĕн хавасланса савăнатăр. Эпир тăвакан çĕнтерӳсенче, тылри юлташсем, сирĕн пулăшу та уççăн палăрса тăрать.

Çавăнпа эпĕ манăн çемьене тăванла кĕтсе илсе, пысăк пулăшу панă Красноармейски районри Яманак ялĕнчи «Красное Сормово» колхоз çыннисене тата колхоз председательне Терентий Осипович Осипова чĕререн тав тăватăп. Çавăн пекех ман çамрăк ачасене—Аликпа Ляльăна яслине йышăнса, тăванла пăхса çитĕнтерекен колхозницăсене те саламласа тав тăватăп.

Фронтовиксем çак йывăр вăхăтра хăйсен çемьисене пулăшакансене ĕмĕр-ĕмĕр манмĕç. Кăна эпĕ хам кăна мар, пиншер фронтовиксен шухăш-кăмăлне пĕлтерсе калатăп.

Коммунистла салампа М. ИВАНОВ».

Мускаври аслă шкулсем ирĕке кăларнă хуласенчи аслă шкулсене пулăшаççĕ

Мускаври чи пысăк аслă шкулсем ирĕке кăларнă районсенчи аслă шкулсене шефа илнĕ.

Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕ Харьковри университетпа таччăн çыхăннă. Вăл Харьковри университета вĕренӳ ĕçне, кафедрăсемпе кабинетсен оборудованине йĕркелесе яма пулăшать. Мускаври государство университечĕ Харьковри университета 10.000 кĕнеке, географи карттисем, химипе физика кабинечĕсем валли оборудовани ярать. Мускаври энергетика институчĕ Харьковри энергетика институтне ура çине тăма нумай пулăшать. Мускаври хулари педагогика институчĕ нумаях пулмасть хăй шефа илнĕ Краснодарти педагогика институчĕ валли 10 ещĕк оборудовани, вĕренӳ пособийĕсемпе литература нумай янă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Америка хаçачĕсем союзлă виçĕ державăн руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранра йышăннă декларацисене пичетлесе кăларни Америка халăхне питĕ интереслентернĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ çапла калать: стратеги тĕлĕшпе каласса татăлни Германие татăклăн пырса çапма май парать; тен, çак хĕллех çавăн пек татăклăн пырса çапĕç, тет.

Корреспондент калана тăрăх, Вашингтонри хăшпĕр официальнăй çынсем конференци союзлă çĕршывсен руководителĕсем хушшинчи туслăхпа пĕрлĕхе çирĕплетнине палăртаççĕ.

Декабрĕн 6-мĕшĕнче каçхине тухнă хаçатсем Тегеранри декларацисене питĕ пысăк саспаллисемпе пухнă ятсемпе пичетлесе кăларнă, статьясен çав ячĕсенче конференцин вăрçă ыйтăвĕсемпе йышăннă решенийĕсене палăртса панă.

Америкăри мĕнпур радиостанцисем хăйсен передачисене чарса лартнă та Тегеранри конференцин декларацийĕсене пама пуçланă.

США вице-президенчĕ Уоллес çапла каланă: Тегеранри конференци çинчен пĕлтерни «пĕтĕм тĕнчери ахаль çынсене питĕ савăнтарĕ. Вăл эпир хамăр кĕтнинчен часрах çĕнтерессине пĕлтерет. Вăл тата виçĕ аслă пуçлăх малашнехи мире çирĕп тăвас тĕлĕшпе пĕрле ĕçлеме тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене хутшăнтарса ĕçлеме тăрăшнине пĕлтерет», тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухнă хаçатсем Тегеранри конференци çинчен пĕлтернисене курăнмалла çĕрте пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çар тĕлĕшпе йышăннă решенисене тата Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтерсе тăкасси çинчен каласса татăлнине питĕ савăнса ырлаççĕ, çавăн пекех тата конференци çирĕп мир туса хума май парать тесе каланине ырлаççĕ. Пур хаçатсем те калаçусем питĕ кăмăллă обстановкăра пулса иртнине палăртаççĕ.

«Вăрçă пирки йышăннă пĕр декларации те çакăн пек чаплăн та татăклăн калайман пулĕччĕ,—тесе çырать «Нью-Йорк таймс» хаçат.—Вăрçă ыйтăвĕсем çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхни Сталин тăрăшнипе пулнă пулмалла, Сталин вăл Европăра çĕнĕ фронт уçма тахçантанпах хистет ĕнтĕ. Анчах Рузвельтпа Черчилль те çавăн пекех тăвасшăн пулнă, вĕсем май пур таран тата тинĕсрипе сывлăшри фронтсем ыйтнă тăрăх Европăна кĕрсе кайма тахçантанпах хатĕрленеççĕ ĕнтĕ, Тегеранри декларацире унта çак условисене ятарласа палăртса хунă. Çĕнĕ фронт уçас ыйтăва хальхи вăхăтра ĕнтĕ çав вăрçă ĕçĕсен анлăшĕпе срокĕсем тĕлĕшпе татса панă. Кунсăр пуçне, кăнтăрти фронта та асăннă.

Вăрçă тĕлĕшпе каласса татăлни çирĕп мир тума май парассине декларации шанса тăрать, — тет юлашкинчен хаçат.—Декларации тĕнче малашне пысăк çĕршывсен диктатури пулса тăрас çуккине ĕнентерет, Атлантика хартийĕпе Мускаври конференцин принципĕсене çирĕплетсе парать, çав принципсем вĕсем пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çĕршывсен çемьине тăвас ĕçе тата пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăха сыхласа, ӳстерсе пырас ĕçе мире юрататакан мĕнпур çĕршывсене—пысăккисене те, пĕчĕккисене те—хутшăнтармалли çинчен калаççĕ. Нимĕç халăхĕ хăйĕн ухмаха ернĕ пуçлăхĕсенчен хăтăлса, хăйĕн кӳршисемпе мирлĕ пурăнас тет пулсан—декларации ăна çавăн пек пĕртен пĕр шанчăк парать ĕнтĕ».

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра вырăнсенче тухакан хаçатсен пысăк пайĕ Тегеранри декларацие ырлать, вăл Гитлерăн пĕрлешӳллĕ нацисене хирĕçтерсе яма хатĕрленĕ планĕсене татăклăн пырса çапать тата Германие аркатса тăкса çирĕп мир тăвассине хăвăртлатакан паха утăм пулса тăрать, тесе çырать.

„Иран союзлă нацисен ретне тăчĕ"

ИРАН ХАÇАЧĔСЕМ ТЕГЕРАНРИ КОНФЕРЕНЦИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ТЕГЕРАН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 6-мĕшĕнче пур хаçатсем те виçĕ державăн Тегеранра пулса иртнĕ конференцийĕ çинчен пĕлтернине пичетленĕ тата виçĕ державăн Иран пирки йышăннă декларацине, И. В. Сталин шах патне пырса кайни çинчен пĕлтернине, çавăн пекех тата Иранран тухса кайнă чухне Сталин юлташ Сохейли патне тата Молотов юлташ Саэд патне янă телеграммăсене пичетлесе кăларнă. Хаçатсем Сталинăн, Рузвельтăн, Черчиллĕн тата Иран шахĕн сăнĕсене пичетленĕ. Пур хаçатсем те тенĕ пекех тата çав конференципе Иран пирки йышăннă декларации çинчен пысăк умстатьясем пичетлесе кăларнă. Иран хаçачĕсем çав конференци Иран столицинче пулнине уйрăмах палăртса çыраççĕ, çакă вăл Иран халăхне питĕ пысăк чыс туни пулать, теççĕ.

ГЕРМАНИН СОФИРИ СКЛАЧĔСЕНЕ СИРПĔНТЕРСЕ ЯНĂ

СТАМБУЛ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, декабрĕн 4-мĕшĕнче ирхине София хули питĕ вăйлă взрыв пулнипе чĕтреннĕ. Çав кун Болгари патриочĕсем нимĕçсен хулари склачĕсене сирпĕнтерсе янă, тесе пĕлтереççĕ.

Çакăн умĕн партизансем чугун çул станцийĕсенчен пĕринче Германин çар хатĕрĕсем тиенĕ икĕ эшелона ӳпĕнтерсе янă.

ВАЙНАНТА ЕВРОПАРИ КОНСУЛЬТАЦИ КОМИССИНЧЕ США-н ПРЕДСТАВИТЕЛĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТНИ

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США президенчĕ Рузвельт Пĕрлешӳллĕ Штатсен Англири посолне Вайнанта Европăри консультаци комиссинче США-н представителĕ пулма уйăрса лартнă. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

СССР Наркомтекстилĕн „энерготрансучтекстиль" Шупашкарти филиалĕ ШОФЕР ПУЛМА ВĔРЕНТЕКЕН КУРСА вĕренме йышăнать. Ку курсра 3-мĕш класс шофер пулма вĕрентеççĕ тата газогенераторлă автомобильсен шоферĕсене хатĕрлеççĕ.

Курсра вĕреннĕ чухне предприятисенче ĕçлеме те юрать, çавăн пекех тата нисçта та ĕçлемесĕр вĕренме те юрать.

Курсра вĕреннĕшĕн укçа тӳлемелле мар.

Нисçта та ĕçлемесĕр вĕренекенсене 3-мĕш класс шофер пулма 2 уйăх хушшинче вĕрентсе кăлараççĕ.

Газогенераторлă автомобильпе çӳреме вĕренес текен шоферсене, вĕреннĕ вăхăтра нисçта та ĕçлемесен, 10 кун хушшинче вĕрентсе кăлараççĕ, вĕреннĕ хушăрах производствăра та ĕçлеççĕ пулсан—20 кун хушшинче вĕрентсе кăлараççĕ.

2-мĕш класс шофера вĕренмелле курсра 17 çултан кĕçĕн мар арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ, пĕлӳ тĕлĕшпе пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Вĕренме 1943-мĕш çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче тытăнаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли пулсан, филиал канцелярийĕнче, канмалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах 9 сехетрен пуçласа 18 сехет çитиччен ыйтса пĕлме пулать.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Карла Либкнехта, 14.

2—1

„ЗАГОТЖИВСЫРЬЕН" Чăваш республикăнчи конторине çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: диспетчер, çăмтата мамăклă тир чĕртавăрĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен товароведсем, бухгалтер-ревизор, кассир-инкассатор, статистиксем, машинистка, завхоз, уборщица-рассыльная.

Столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. Ленина, 31. Телефонсем: 6—42 тата 2—61.

2—1

Приволжски леспромхозра ĕçлеме СТАТИСТИК кирлĕ. Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36. Телефон. 7—88

СССР Госпланĕ çумĕнчи ЦСУ-н Горькири Учебнăй Комбиначĕн Шупашкарти филиалĕ çак отделенисене вĕренме илет:

1. Кĕске вăхăт хушшинче БУХГАЛТЕР пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларакан отделение. Ку отделение вăтам шкулти 9-мĕш е 10-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Шут ĕçĕпе чылайччен ĕçленĕ пулсан, 7-мĕш класран вĕренсе тухнисене те илеççĕ. Отделени 3 уйăх хушшинче бухгалтер пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларать.

2. Кĕске вăхăт хушшинче промышленность тĕлĕшпе СЧЕТОВОД пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларакан отделение. Отделение туллимар вăтам шкулти 6-мĕш е 7-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Ку отделенире те 3 уйăх вĕренмелле.

3. Кĕске вăхăт хушшинче КОЛХОЗРА СЧЕТОВОД пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларакан отделение. Ку отделение туллимар вăтам шкулти 5-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Кунта 2 уйăх вĕренмелле.

Вĕренессе производствăран татăлмасăр вĕренмелле. Вĕреннĕшĕн укçа тӳлемелле.

Заявленисене 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме 1944-мĕш çулхи январĕн 10-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Адрес çапла: г. Чебоксары. Канашская, 21.

ДИРЕКЦИ.

Чăваш АССР Прокуратуринче ĕçлеме ГЛАВНĂЙ БУХГАЛТЕР, РАБОЧИ-КОНЮХ, УБОРЩИЦА кирлĕ.

Рабочи-конюхпа уборщица валли хваттер пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, Отдел кадров Прокуратуры.

Шăхасан районĕнчи Атыковăран лаша тарнă. Паллисем çакăн пек: ячĕ—„Пропеллер" 1937-мĕш çулта çуралнă, тĕсĕ—çӳрен, çамки çинче шурă çăлтăр пур, çӳллĕшĕ 157 сантиметр.

Çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Шихазанский район, Правлению Атыковской сельхозартели „Молодой колхозник".

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1167. Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.